Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

27 (7559) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи апрелĕн (ака) 9-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ĕç сыхлавĕн уйăхлăхĕ

Ĕçре инкек ан пултăр

– Çынсем ĕçе сывлăхлă килччĕр, ĕçрен те киле ырă сывлăхпа таврăнччăр. Пирĕн тĕп задача çакă пулмалла, – терĕ çак кунсенче пулса иртнĕ районти предприятисемпе организацисен ĕç сыхлавĕн специалисчĕсемпе (инженерĕсемпе) ирттернĕ семинар-канашлура Чăваш Республикинчи патшалăх ĕç инспекторĕ, ку ыйтупа пирĕн районпа ĕçлекен куратор В.А. Мохнатова.

Шел пулин те, кулленхи проблемăсемпе куçа-куçăн тĕл пулнă чух хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмалли пирки манни те пулать. Ку вара çын пурнăçне хăрушлăха кĕртсе ӳкерет. Çакă пушă сăмахсем мар иккеннине иртнĕ çул районта производствăра пулса иртнĕ 7 инкек те çирĕплетсе парать. Мĕн тумалла кăçал çакнашкал тĕслĕхсем ан пулччăр тесен? Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.К. Ананьев кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйтупа шăпах çурхи ĕçсем вăхăтĕнче инкек-синкек ан пултăр тесен мĕн тумалли çинче чарăнчĕ. Чи малтанах çакă хамăр яваплăхран килет. Ĕç сыхлавĕн инженерĕсем хăйсен тивĕçне епле пурнăçланинчен. Халĕ акă ял хуçалăх техникине техосмотр тăратас ĕç пуçланчĕ. Ун витĕр тухман пĕр техника та ĕçе тухмалла мар. Е тата вăрлăха имçамланă вăхăта илер. Кунта хăрушсăрлăх техникин правилисене çирĕп пăхăнмалла, ĕçлекенсемпе инструктаж ирттермелле тата ытти те.

Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçин çумĕ А.Н. Кузьмин каланă тăрăх, предприятисенче ĕç сыхлавĕн тата хăрушсăрлăх техникин правилисене мĕнле пăхăннине тăтăшах тĕрĕслеççĕ. Ирттнĕ çул çакнашкал тĕрĕслеве 62 предприятипе организацире ирттернĕ. Пĕтĕмпе 216 çитменлĕхе палăртса хăварнă.

Ларура район кураторĕ çакна палăртсах каларĕ: ял хуçалăхĕнчи тĕп специалистсен – агрономсен, зоотехниксен хăйсен объекчĕсенче ĕç сыхлавĕн законодательствисене епле пăхăннине çирĕп контроллесе тăмалла.

Л. ПАВЛОВА.

«Çĕнтерӳ ялавне» малалла çырăнтараççĕ

Район хаçатне 2008 çулхи иккĕмĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.

Ултă уйăха çырăнса илмелли çĕнĕ хак - 181 тенкĕ те 80 пус. Малтанхипе танлаштарсан райхаçата ултă уйăха çырăнса илмелли хак 12 тенкĕ те 18 пус çеç ӳсрĕ. «Чăваш пичет» киоскĕсенче çырăнмалли хак - 135 тенкĕ.

Суворов яч. хис. хуçалăхра иртнĕ çул кашни 100 ĕне пуçне 100 пăру илме пултарнă. Çак ӳсĕмре сăн ӳкерчĕкре куракан «Районти чи лайăх техник-осеменатор» ята тивĕçнĕ Фаина Николаевна Максимован тӳпи те пĕчĕк мар.

Республикăра

Вăхăт вĕçленичченĕçлĕп

«5 плюс» телеканалăн «Обзор местности» кăларăмĕнче Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров тухса каласнă. Вулакансене интервью дайджесчĕпе паллаштаратпăр.

Суйлав рекорчĕ тума тăрăшмастпăр

Кăларăм пуçламăшĕнче Н. Федоров çĕршыв Президенчĕн суйлав кампанийĕн Чăваш Енри пĕтĕмлетĕвне хак панă.

– Тĕрĕс кăтартусем. Вĕсем çынсен паянхи кăмăлне палăртаççĕ, - тенĕ вăл. – Эпĕ нихăçан та ку тĕлĕшпе Мордовие е Тутарстана çитме е иртсе кайма тĕллев лартмастăп. Мĕншĕн тесен пирĕн хамăрăн менталитет, культура. Пирĕн суйлавçăсене тӳрĕ кăмăлпа сасăланăшăн тав тăвас килет. Граждансене эпĕ килĕштернĕ тата хама килĕшмен çынсемшĕн сасăланăшăн та тав тăватăп. Никамăн та, Турăсăр пуçне, çут тĕнчере камшăн сасăламаллине пĕлмелли ирĕк çук. Эпир ахаль çынсем, шел те, яланах тĕрĕс йышăну тума пултараймастпăр. Анчах та, чи пĕлтерĕшли, çак тĕлĕшпе Чăваш Республикин опытне шута илсе тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тума пĕлмелле.

Эпир малалла та суйлав рекорчĕ тума ăнтăлмăпăр, анчах та пурăнмалли çуртйĕр тăвассинче, спортра, промышленноç производствин ыйтăвĕсенче, ял хуçалăхĕнче, ĕç укçине ӳстерессинче хăть хăш регионпа та мала тухассишĕн хаваспах кĕрешĕпĕр. Пире социаллă пурнăç, экономика сферинче рекордсем кирлĕ, анчах та ниепле те суйлавçăсен 99 процентĕ суйлава хутшăнни тата пĕр кандидатшăн суйлавçăсен 90 процентĕ сасăлани мар.

2008 çулхи хăюллă старт

Çак телекăларăмра цифра нумай пулман. Çапах та Н. Федоров экономикăри хăш-пĕр кăтартăва асăнмасăр иртеймен.

– Кăрлач-нарăс уйăхĕсенчи кăтартусем тăрăх промышленноç производстви – 14 процент, ял хуçалăхĕ – 4,5 процент, ĕç укçи вăтамран – 31 процент, чăн тупăш – 17 процент, пурăнмалли çурт-йĕр тăвасси 30 процент ӳсни паллă. Тупăшран илекен налук виçи эпир 2008 çулхи бюджета хывнинчен нумайрах пулĕ, - тенĕ Президент. – Çавна май уйрăм çынсен тупăшĕсенчен куçарнă укçа виçи те ӳсĕ. Квартал е çур çул кăтартăвĕсем тăрăх эпир бюджета çĕнĕрен пăхса тухма пултарăпăр тата муниципалитетсен социаллă ыйтăвĕсене татса пама кирлĕ укçа виçине ӳстерĕпĕр тесе шухăшлатăп.

Чăваш Ен ют çĕршыв инвестицийĕсене илĕртессипе пĕрремĕш хут Удмуртирен иртсе кайни савăнтарать. Вăл çулталăкне 10 миллион тонна нефть кăларать, çакă укçа çине куçарсан Чăваш Ен бюджетĕнчен те нумайрах. Пире шанчăклă партнерсем пек пĕлеççĕ, хаклассем, пирĕн ят-сум ӳсрĕ. Эпир республика экономикин çирĕп никĕсне туса хутăмăр, ăна аркатма йывăр. **(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

Çĕр пайĕн ыйтăвĕсемпе

Çĕр пайĕсене харпăрлăха илес тетĕр пулсан

Хальхи вăхăтра сахал мар граждансем çĕр пайĕсене харпăрлăха илеççĕ. «Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсен çаврăнăшĕ çинчен» Федераллă саккунăн 15-мĕш статйипе килĕшӳллĕн ял хуçалăх çĕрĕсене приватизацилепе илнĕ çĕр пайĕ асăннă Федераллă саккун вăя кĕриччен çĕр участокĕсен пĕрлехи харпăрлăх пайĕ шутланать. Çĕр пайĕн правине çирĕплетекен документ çĕр пайĕн правин свидетельстви пулса тăрать.

Çĕр пайĕсене харпăрлăха çирĕплетме граждансен çак ĕçсене туса ирттермелле:

Чи малтанах тивĕçекен çĕр пайĕнчен çĕр участокне çирĕплетессин ĕçĕсене туса ирттерме кирлĕ документсем пухасси. Вĕсем шутне çаксем кĕреççĕ:

– çĕр пайĕн правин свидетельстви;

– ял хуçалăх предприятийĕсенче çĕр пайне илмелли çынсен списокне район администрацийĕн пуçлăхĕ çирĕплетнĕ йышăнăвăн копийĕ;

– паспорт е харпăрлăх хуçин интересĕсене хӳтĕлеме нотариус çирĕплетсе панă доверенность.

Иккĕмĕшĕнчен, çĕр пайĕ шучĕпе уйăрса паракан çĕр участокĕн вырăнне палăртасси.

Çĕр пайĕ шучĕпе уйăрса паракан çĕр участокĕн вырăнне çĕр пайĕсен хуçисем хăйсен пĕрлехи пухăвĕн йышăнăвĕпе палăртаççĕ. Çĕр пайĕсен хуçисен пĕрлехи пухăвне çак çĕр пайĕсемпе усă куракан ял хуçалăх организацийĕн е çĕр пайĕн хуçисен сĕнĕвĕпе ирттереççĕ.

Çĕр пайĕн хуçисене 30 кунран маларах пуху пухасси пирки çырупа çырса ярса тата ятарлă щитсем çине пĕлтерӳсем вырнаçтарса, е тата «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатра пĕлтерӳ пичетлесе кăларса пĕлтереççĕ. Çĕр пайĕсен хуçисен 20 процентĕнчен кая мар е пĕрлехи харпăрлăхри çĕр участокĕн 50 процентĕнчен кая мар пайĕпе усă куракансем хутшăнсан пĕрлехи пухăвăн йышăнăвĕ саккунлă шутланать. Унччен хăйсене çĕр пайĕ шучĕпе çĕр участокĕ уйăрса панă çынсем вара пуху ĕçне хутшăнмаççĕ. Çак çĕр участокне уйăрса парассишĕн çĕр участокĕн 50 процентĕнчен кая мар пайĕпе усă куракансем сасăласан йышăну саккунлă.

Пуху йышăнăвне 3 экземпляр çыраççĕ. Вĕсенчен пĕри çĕр пайĕн хуçисен пĕрлехи пухăвĕн председателĕнче, тепри пуху ирттерме сĕнекен аллинче, виççĕмĕшĕ ял тăрăхĕнче упранаççĕ. Пуху йышăнăвĕпе пĕрле пухăва хутшăннă çĕр пайĕсен хуçисен списокĕ пулмалла, çĕр пайĕсен хуçисем пулнине çирĕплетекен документсен реквизичĕсене кăтартмалла.

Енчен те пуху уйăракан çĕр участокĕн чиккисене çирĕплетмерĕ пулсан, çĕр пайĕн хуçи ытти çĕр пайĕн хуçисене çĕр участокне ăçта уйăрасси пирки çырупа çырса пĕлтерет е ку пĕлтерĕве «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатра пичетлет. Ку пĕлтерӳре уйăракан çĕр участокĕн вырăнне (тавралăхра унăн чиккисене палăртма май пултăр), ытти çĕр пайĕн хуçисем хушшинче çакăнпа килĕшменнисем пулсан асăннă çĕр пайĕн хуçи патне, Раççей куçман пурлăхăн Чăваш Республикинчи управленине, çĕр участокĕ вырнаçнă çĕрти ял тăрăхне çырса пĕлтермелли пирки кăтартни пулмалла.

Уйăрма ыйтнă çĕр участокĕ пирки тивĕçлипе пĕлтернĕ хыççăн 30 кун иртиччен çĕр пайĕсен хуçисем хушшинче килĕшменнисем тупăнмасан ку çĕр участокне уйăрасси пирки килĕшсе татăлнă шутланать. Енчен те вара килĕшменнисем тупăнсан çĕр участокĕн вырăнĕ пирки тавлашăва ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ тата ял тăрăхĕсен çĕрĕсемпе усă курасси тата сыхласси енĕпе ĕçлекен ведомствăсем хушшинчи комисси татса парать. **(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

Ачасене пулăшмасăр юлар мар

Ыр кăмăллăх марафонĕ пуçланчĕ

Ачасене аслисем енчен яланах тимлĕх кирлĕ. Уйрăмах тулли мар çемьере е ашшĕ-амăшĕсĕр ӳсекен ачасем çакна хытă кĕтеççĕ.

Районти 1224 ача тулли мар çемьере ӳсет. 501 ачан ашшĕ е амăшĕ çук. 88 ача вара – хăр тăлăх. Мĕншĕн пирĕн вĕсене алă тăсса памалла мар.

2007 çула пирĕн президент Ырă ĕçсен çулталăкĕ тесе палăртрĕ. Çулленхи йăлапа ĕнер районта «Ачасен ячĕпе, ачалăх ячĕпе» ырă кăмăллăх марафонĕ пуçланчĕ. Ăна районти Культура çуртĕнче 10 сехетре уçрĕç.

Ыр кăмăллăх марафонне ирттерекен комитет район çыннисене çак ырă ĕçе пысăк хавхаланупа хутшăнма чĕнсе калать. Ырă тăвакан хăй те ырă курнă тенине манар мар. Укçа-тенкĕне финанс пайĕн бюджет тулашĕнчи 06974120035 номерлĕ счечĕ çине куçармалла. Ялала парас текенсене социаллă пулăшу пайне пыма ыйтаççĕ.

Йышăну

Транспорт çӳрессине чакараççĕ

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2008 çулхи мартăн 14-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн çурхи ейӳ вăхăтĕнче çулсем çинчи хăрушлăха, çулсем пăсăлассине чакарас тата çулсем çинчи искусствăлла сооруженисене сыхласа хăварас тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕ ятарлă йышăну кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн апрелĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса майăн 9-мĕшĕччен пысăк йывăрăшлă автотранспорт хатĕрĕсене кашни ось çине тивекен йывăрăша кура район харпăрлăхĕ шутланакан автоçулсем çинче çӳрессине вăхăтлăх чакараççĕ.

Çул çӳреме тӳлевсĕр пропусксене çунтармалли-сĕрмелли материалсем турттаракан, заводсенчен ял хуçалăх техники тиесе килекен, медицина тата ветеринари препарачĕсем, вăрлăх турттаракан тата ытти хăш-пĕр ятарлă автомашинăсем валли кăна параççĕ.

Пушарсене асăрхаттарас тĕллевпе

Район администрацийĕн пуçлăхĕ апрелĕн 3-мĕшĕнче «2008 çулхи çуркуннехи-çуллахи тапхăрти пушар хăрушсăрлăх çинчен» 222 № йышăну тунă.

Апрелĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене пушар тухас хăрушлăха сирессипе мероприятисен планĕсене туса хатĕрлеме, ку енĕпе ăнлантару ĕçĕсене ирттерме сĕннĕ. Асăннă йышăнурах ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисен, район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пайĕн тата патшалăх пушар хăрушсăрлăх уйрăмĕпе 37 № пушар чаçĕн çав тапхăрта пушартан асăрханассипе туса ирттермелли ĕçĕсене те палăртнă.

Налук инспекцийĕнче

Налуксене вăхăтра тӳлесен парăм пулмасть

Пĕрремĕш кварталта Етĕрне, Муркаш, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче налук органĕн, суд приставĕсен тата ГИБДД службисен ĕçченĕсем пĕрлехи 27 рейд ирттернĕ. Пĕтĕмпе 1200 çынна, 80 организацие тĕрĕсленĕ. Пурĕ 500 пин тенкĕ шыраса илнĕ. Çав шутран 100 пин тенкĕ ытла уйрăм çынсене тӳлеттернĕ.

Çак тĕслĕхсем налук саккунĕсене пурнăçламаннисем йышли çинчен каласççĕ. Апла пулин те парăмçăсен йышĕ чакса пынине палăртас килет.

Кун йышши рейдсене малашне те ирттеретпĕр. Налук тӳлеменнисене çул çинче те тытса чарăпăр, хăйсем патне те çитĕпĕр. Пĕр-пĕрин кăмăлне пăсас мар тесен налуксене вăхăтра çеç тӳлемелле.

Юлашкинчен çакна аса илтеретĕп: 2007 çулшăн транспорт налукне мартăн 31-мĕшĕччен тӳлемеллеччĕ. Кая юлнисен парăмсене çак кунсенчех татма тăрăшмалла.

А. БОБРОВ,
налук инспекцийĕн специалисчĕ.

Юбилей

Саламлатпăр

Орининти вăтам шкулта кĕçĕн классене вĕрентекен хиселлĕ ĕçтешĕмĕре, кăмăллă юлташăмăра, таса чунлă вĕрентекене – **Татьяна Сергеевна ГОРШКОВАНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.

Çак пархатарлă ĕçре вăй хунăшăн, тăрăшса ĕçленĕшĕн сире кашни шкул ачипе ашшĕ-амăшĕ çĕре çити пуç тайса тав сăмахĕ калать. Юбилей ячĕпе саламласа сире тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хăват, савăк кăмăл, интереслĕ уроксем, юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, çемьере килĕшӳ, пурнăçра телейпе ăнăçу сунатпăр! Çуралнă кун ячĕпе сире, Татьяна Сергеевна!

Саламлаканĕсем: пĕрле ĕçлекенсем, шкул ачисем.

Коллектив МОУ «Вурманкасинская начальная школа-детский сад» поздравляет доктора филологических наук, профессора, заместителя декана факультета чувашской филологии и культуры, заведующую кафедрой методики преподавания чувашского языка и литературы Чувашского государственного университета им. И.Н. Ульянова **Галину Алексеевну ЕРМАКОВУ** с юбилеем! Желаем крепкого здоровья, молодости, красоты, неиссякаемой энергии, творческих успехов и большого личного счастья.



Желаем Вам в работе вдохновенья,
В кругу семьи – тепла и доброты,
Среди друзей – любви и уваженья,
И в личной жизни – сбывшейся мечты.